### Хĕллехи спорт сезонĕ уçăлчĕ

# Йĕлтĕрçĕсемшĕн сивĕ чăрмав мар

Спорт тусĕсемшĕн тинех кĕтнĕ самант çитрĕ. Йĕлтĕрçĕсем çак куна кĕтсе ывăнчĕç те пулĕ. Февралĕн 3-мĕшĕнче хĕллехи спорт сезонне уçнă ятпа тата «Раççей йĕлтĕр йĕрĕ-2007» йĕлтĕрçĕсен Пĕтĕм Раççейри ăмăртăвĕсен 1-мĕш тапхăрне халалласа Муркашри йĕлтĕр базинче ăмăрту иртрĕ. Спортпа туслă, сывлăха упрас текенсем кашниех старта тухнă тейĕн.



Ăмăртăва пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсен, ял тăрăхĕсен, ял хуçалăх предприятийĕсен, организацисемпе учрежденисен, район администрацийĕн пайĕсен пĕрлештернĕ командисем килсе çитрĕç. Ăмăртăва район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов уçрĕ. Пурне те ăнăçусем, лайăх кăтартусем сунчĕ.

«Раççей йĕлтĕр йĕрĕ-2007» ăмăртăва хутшăнакан арçынсемпе хĕрарăмсем 2 километрлă дистанцире ăмăртрĕç. Тĕрĕссипе вара çакăнта хутшăннин тĕп кăтартăвĕ вăхăт мар, массăлăх. Ку енĕпе пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсем хушшинче Очăкасси шкулĕн команди палăрчĕ. Панклисемпе Кашмашсем иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене пайларĕç.

Вăтам шкулсенчен Ильинкăсем пĕрремĕш вырăна тухрĕç. Тивĕшсем – иккĕмĕш, Çатракассисем виççĕмĕш пулчĕç.

Сăмах май, çак шкулсем пурте «Раççей йĕлтĕр йĕрĕ-2006» ăмăртăва хутшăнса малти вырăнсене йышăннăччĕ.

Предприятисемпе организацисем тата ял тăрăхĕсем хушшинче районти шалти ĕçсен пайĕ пĕрремĕш вырăна тивĕçрĕ. Иккĕмĕшĕ Чуманкасси ял тăрăхĕ пулчĕ. Виççĕмĕш вырăна районти выльăх-чĕрлĕх чирĕсемпе кĕрешекен станци коллективĕ тухрĕ.





Предприятисемпе организацисен, учрежденисен, шкулсен, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен тата ытти шайри ертӳçĕсен хăйсен уйрăм старт пулчĕ. Арçынсем хушшинче пĕрремĕш вырăна Сосновка шкул директорĕ О.А. Максимов тивĕçрĕ. Иккĕмĕшĕ Шетмĕпуç ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н.П. Александров пулчĕ. Виççĕмĕш вырăна район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов тухрĕ.

Хĕрарăмсем хушшинче Хорнуй шкул директорĕ М.В. Колесникова пĕрремĕш вырăна тивĕçрĕ. Иккĕмĕшĕ – Калайкасси шкул директорĕ И.В. Осипова. Виççĕмĕш вырăна Ильинкăри Культура çурчĕн ертӳçи И.М. Таймаскина тухрĕ.

Ăмăртăва хушăннисене свидетельствăсем, дипломсемпе хаклă парнесем парса район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов саламларĕ. Малашне те çавăн пек активлă пулма сунчĕ.

Йĕлтĕрçĕсен çак пысăк спорт уявне 515-ĕн хутшăнчĕç. Кăçалхи февралĕн 11-мĕшĕнче çĕршыври 80 хулара йăлана кĕнĕ çулленхи массăллă ăмăрту – Пĕтĕм Раççейри йĕлтĕрçĕсен «Раççей йĕлтĕр йĕрĕ - 2007» XXV чупăвĕ иртет. Шупашкар хулинче иртекен ăмăртăва пирĕн районтан 150-ăн хутшăнĕç.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

**Сăн ӳкерчĕксенче: ăмăртăва хутшăнакансене район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов саламлать; районти шалти ĕçсен пайĕн команди; ертӳçĕсем хушшинче пĕрремĕш – Сосновка шкулĕн директорĕ О.А. Максимов.**

### Иртнĕ çул итогĕсене пĕтĕмлетсе

# Ыйтусене пĕрле сӳтсе яврĕç



Январĕн 29-мĕшĕнче иртнĕ çулхи ĕç-хĕле пĕтĕмлетме районти куç курманнисен пĕрлешĕвĕ пуху ирттерчĕ. Иртнĕ çул организацире тата унăн тулашĕнче сахал мар улшăну пулса иртрĕ. Çакă вара куç япăх куракансене те тӳрремĕнех пырса тивет. Çавăнпа пуçтарăнчĕç те вĕсем çав кун пĕрлехи пухăва. Çавăн пекех пĕрлешĕвĕн республикăри ертӳçисем те килсе çитрĕç.

Чи малтанах организаци ертӳçи А.Д. Михайлова тухса калаçрĕ, отчет туса пачĕ. Пĕрлешӳре 149 инвалид шутланса тăрать, 9 инвалид çемьере 14 ача ӳсет. Организаци ĕçченĕсем А.Д. Михайлова тата Е.Ф. Никитина кашнинпех тачă çыхăну тытаççĕ, çемьесене те çитсе курма тăрăшаççĕ. Çакă активлă çынсен пĕрлешĕвĕ. Çавăнпа та вĕсем районти тата унăн тулашĕнчи мероприятисене хутшăнаççĕ, çĕнтерӳçĕ пулса дипломсемпе, хаклă парнесемпе таврăнаççĕ. Ĕçлĕ çул çӳреве тухса çӳреме, çавăн пекех район шайĕнче пухăнма, ытти ыйтусене татса пама ЧР Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерствин районти социаллă хӳтлĕх пайĕ пулăшать. Ытти тĕл пулусенче социаллă ыйтусем тăтăшах тĕл пулатчĕç пулсан, хальхи пухура вара çакă курăнмарĕ. Тен, çакă ырă енне сулăнни? Пĕрлешӳри активлă çынсене ветеран удостоверенийĕсем, Хисеп грамотисем парса чысларĕç.

Районти куç курманнисен вырăнти организцийĕ март уйăхĕнче 60 çул тултарать. Çавăнпа та кунта вăй хуракансем сирĕнтен асаилӳсем кĕтеççĕ, истори альбомĕ тума хатĕрленеççĕ.

**Р. МАКАРОВА,**
**Сăн ӳкерчĕкре: пухăва хутшăннисем.**

### Патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕнчен хыпарлаççĕ

# Тимлĕх, яваплăх пулччăр

ПАИ сотрудникĕсем, тивĕçлĕ органсен ĕçченĕсем çул çинчи синкерлĕхсен шутне чакарас енĕпе чылай мероприятисем туса ирттереççĕ. Анчах та кашни водителе, çуран çӳрекен çынна асăрхаттарма майĕ те çук. Çапах та руль умне ӳсĕрле ларни, тимлĕхе çухатни, автотранспорт йышĕ хăвăрт ӳссе пыни аварисен шучĕ пысăкланасси çине пысăк витĕм кӳрет.

Январĕн 21-мĕшĕнче Мускав-Уфа автоçулăн 625-мĕш километрĕнче 21 сехетре Магнитогорскра пурăнакан Е.П. Смирнов хăйĕн КамАЗ-5320 автомашинипе Удмурт Республикинчи М.Н. Арекеев тытса пыракан «HYNDAI» автомашинăна çапăнать. Асăннă автомашинăри Э.Н. Дунскаяна, юнашар ларса пыраканскерне, Шупашкар больницине вырттарма тивнĕ.

Январĕн 13-мĕшĕнче 23 сехет те 45 минутра Москакассинчи Культура çурчĕ умĕнче Е.Г. Игнатьев тытса пыракан ВАЗ-2108-3 маркăллă автомашина каялла чакнă самантра Р.А. Ефимовăн ВАЗ-2111 автомашинине çапăнать.

Январĕн 19-мĕшĕнче 14 сехет те 25 минутра Муркашри Октябре 50 çул урамĕнче В.В. Мясников тытса пыракан ВАЗ-2107-4 маркăллă автомашина çаврăнас паллăна кăтартакан çутăна вăхăтра çутман пирки тата ытти транспорт хатĕрĕсем çывăхра пулнине лайăх пăхман пирки А.И. Блинов тытса пыракан ГАЗ-31105 маркăллă автомашинăпа çапăннă.

**С. ИВАНОВ,**
**районти шалти ĕçсен пайĕн ПАИ уйрăмĕн пропаганда инструкторĕ, милици лейтенанчĕ.**

### Редакци почтинчен

# Ĕçлекенсене пысăк тав

Сирĕн пата пĕрремĕш хут çыратăп. Хам эпĕ Мордва Республикинчен. Шăпана пула Йӳçкассинчи ветерансен çуртне лекрĕм. Икĕ уйăх каялла йывăр чирлесе ӳкрĕм. Кунта ĕçлекенсем епле тăрăшрĕç пулин те, операцисĕр май килмерĕ. 60 куна яхăн йĕркеллĕ çывăрман темелле. Ыратни лайăх япала мар. Хыççăн районти тĕп больницăна выртма тиврĕ.

Кунта пур çĕрте те тасалăхпа тирпейлĕх хуçаланать. Апатне те илсе пырса параççĕ, çимеллисем патне магазина та кайса килеççĕ. Чăннипех те вĕсем ылтăн алăллă ĕçченсем тесе калас килет манăн. Ырă кăмăллă пулни тата сывалакансемшĕн чи хаклă эмелрен те паха.

Уйрăмах Ю.А. Кузнецов, Г.Н. Огурцов хирургсене, П.И. Лукоянова медицина сестрине, Ю.А. Корольков, И.А. Петрова анестезиологсене, Л.В. Сурикова медицина сестрине пысăк тав сăмахĕ калас килет. Хăйсен ĕçне чăннипех те чун хушнă пек, тивĕçлипе пурнăçласа пыраççĕ вĕсем.

**А. ТЮГАШКИН, Мордвари «Знамя», «Республика молодая» хаçатсен штатра тăман корреспонденчĕ.**

### 1943 çулхи февралĕн 2-мĕшĕ – Нимĕç фашисчĕсене Сталинград патĕнчи çапăçура çапса аркатнă кун

# Хисепе тивĕç ветеран



Сталинград çывăхĕнчи çапăçăва хутшăнакансем, шел пулин те, пирĕн хушăра виççĕн кăна юлчĕç. Вĕсенчен пĕри – Юнкă ял тăрăхĕнчи Егор Никифорович Илугин. Январĕн 30-мĕшĕнче вара вăл 84 çул тултарчĕ.

1937 çулта 7 класс вĕренсе пĕтерет. Вăрçă пуçланиччен тăван хуçалăхра лашасем пăхать тата çулталăк хушши почтальон пулса ĕçлет. 1942 çулхи март уйăхĕнче тăшманпа çапăçма тухса каять. Малтанах Краснодар хулинчи училищĕре пĕлӳ илет, курсант пулса тăрать. Çапла вара çамрăк салтакăн Дон шывĕ хĕрринчи хĕрӳ çапăçăва тухма тивет.

– Присягăна та эпир çакăнтах тытрăмăр. Тăшман ытла та хаярччĕ çав, тăвата кун хушши татти-сыпписĕр вутлантарчĕ. Пире, шыв урлă каçма пуçланăскерсене, каялла чакма хушу пулчĕ. Çапла вара, тăшмана каçарас мар тесе, чукун çул кĕперне сирпĕтме тиврĕ. Сыхланса юлтăмăр, каялла чакмарăмăр. Техника енчен аптăраман, вăл вăйлăччĕ, çирĕпчĕ.

Вĕççĕр-хĕрсĕр тăшман вутçулăмĕнчен сыхланса юлма та çук. Ноябрь уйăхĕнче амантăм, çапла вара госпитале лекме тиврĕ. Тус-тантăшсем хĕрӳ çапăçура пулнă вăхăтра унта выртма йывăр. Сывалса тухнă хыççăн Харьков хулине çитрĕмĕр. Ку кĕрешӳре улттăн кăна юлтăмăр. Кунĕн-çĕрĕн вуткăвар сирпĕнни халĕ те чуна çӳçентерет.

1943 çулччĕ, эпĕ вара хаяр çапăçура каллех сусăрăнтăм. Сывалса тухнă хыççăн Литвапа Латви хулисене те çитме тӳр килчĕ. Юлташсене нумай çухатрăм. Мĕн тăвас тетĕн, вăрçă никама та шеллемест.

1945 çулта эпĕ каллех госпитальте выртаттăм. Вăрçă пĕтнĕ теççĕ. Çакна, паллах, питĕ хытă кĕтнĕ, анчах та ĕненме йывăр. Çӳлелле пенĕ сасăсем илтĕнеççĕ те тăшмана тĕп тунине ĕнентĕмĕр.

Çапла вĕçлерĕ хăйĕн каласăвне орденсемпе медальсем çакнă ветеран.

Тăван хуçалăха таврăнсан тимĕрçĕ, трактор паркĕн бригадирĕ, слесарь пулса вăй хунă. Тивĕçлĕ канăва тухсан та алă усса ларман, хуçалăха аталантарассишĕн тăрăшнă. Халĕ Егор Никифорович ял-йыш умĕнче пысăк хисепре.

**Р. АЛЕКСАНДРОВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: хисепе тивĕç ветеран.**

### Спорт

# Ирĕклĕ майпа кĕрешсе

Январĕн 27-мĕшĕнче Шупашкар районĕнчи Апаш ялĕнче Чăваш Республикин физкультурăпа спортăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕн В.И. Смородиновăн парнисене çĕнсе илессишĕн яшсемпе хĕрсем хушшинче ирĕклĕ майпа кĕрешессипе республика турнирĕ иртнĕ.

Муркаш районĕн команди шутĕнче Москакасси тата Муркаш шкулĕсенчи çамрăк спортсменсем вăй виçнĕ. 1991 çулта çуралнă яшсем хушшинче Муркаш шкулĕнче 8-мĕш класра вĕренекен Александр Орлов палăрнă. 46 килограма çитиччен виçе категорийĕнче вăл 2-мĕш вырăн йышăнма пултарнă. Хĕрсем хушшинче 42 килограма çитиччен виçе категорийĕнче Москакасси шкулĕнчи Марина Кондукторова ăнăçуллă ăмăртнă. Малтанхи 2 тытăçăва вăл çĕнтерӳпе вĕçлеме пултарнă. Финалта вара Апаш шкулĕн спортсменкине выляса янă.

Çапла вара пирĕн спортсменсем 2-мĕш вырăнсем йышăнса турнирăн кĕмĕл медалĕсене тата дипломсемпе парнесене тивĕçнĕ.

**А. ФЕДОРОВ,**
**ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн аслă тренерĕ.**


## Пĕлтерӳсем. Объявления

**Предлагаем керамзитобетонные блоки пропаренные; цемент, шифер, рубероид, песок речной, гравмассу, керамзит. Доставка бесплатно. Предлагаем транспортные услуги.**
**Тел.: 8-960-307-41-78, 8-927-862-27-02, 8-927-851-47-82.** 1-3.

**Муркаш, Шаптак Муркаш, Çурлатри ялĕнче пурăнакансене тырă авăртса паратăп. Тырăна армана турттарса пыма тата çăнăха леçсе пама транспорт пур.**
**Тел.: 2-25-18 (каçхине шăнкăравламалла).** 1-2.

**Молодой интеллигентной семье в с. Моргауши срочно требуется няня для ухода за ребенком 1,5 года. Режим работы: 5 дней в неделю с 8 до 18 часов. Оплата: 135 руб в день плюс питание. Требования: женщина 25 - 55 лет, ответственная, чистоплотная, порядочная, с опытом работы, медицинское или педагогическое образование.**
**Тел.: 8-927-850-94-88.**





Нискассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул коллективĕ ку шкулта нумай çул хушши техслужащи пулса ĕçленĕ, çак шкултах техслужащи пулса ĕçлекен О.В. Круглован кукамăшĕ

**Юлия Сергеевна**
**ПРОХОРОВА**

вилсе кайнă пирки çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле хурланнине пĕлтерет.


**ГУП ЧР “Моргаушский издательский дом”**
Моргаушская районная газета
"ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ"
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.

**Заместитель гл. редактора**
**В.Л. ШАПОШНИКОВ**

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: **morpress@cbx.ru**

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

**Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.**
**Печать офсетная, объем 1,0 п. листа. Тираж 3530.**
**Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулĕпе».**
**Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 06.02.2007 г.**
**Заказ**
**Дежурный по номеру ШАПОШНИКОВ В.Л.**
**ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.**

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан в типографии ГУП ”ИПК ”Чувашия”: 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.